Районта 2007 çулта выльăх-чěрлěх отраслěнче ěçлекенсем хушшинче иртнě экономика ăмăртăвěн кăтартăвěсем

# Малтисемпе танлашма тăрăшар!

Район администрацийěн пуçлăхě Ю. Иванов «Районта 2007 çулта выльăх-чěрлěх отраслěнче ěçлекенсем хушшинче иртнě экономика ăмăртăвěн кăтартăвěсем çинчен» йышăну çине алă пусрě. Çулталăк хушши выльăх-чěрлěх отраслěнче вăй хунă ěçченсемшěн ку питех те кěтнě самант. Çак кěрешŷре кашниех çěнтерме тăрăшрě, анчах чыс чи сумлăрах вăй хунисене кăна.

1. 2007 çул кăтартăвěсемпе экономика ăмăртăвěнче çаксем çěнтернě тесе шутлас тата вěсене парнесем парас:

– Муркаш район администрацийěпе агропромышленность комплексěнче ěçлекенсен профсоюз райкомě çирěплетнě **1-мěш степеньлě диплома**, куçса çŷрекен вымпелпа 10 пин тенкě укçан парнене «Герой» ял хуçалăх производство кооперативне (председателě Р. Н. Тимофеев) парас. Асăннă хуçалăх 100 гектар çěр пуçне 120,3 центнер аш-какай, 686,9 центнер сěт туса илнě, кашни ěне пуçне 5035 килограмм сěт сунă, сыснасене талăкра вăтамран 375 грамм, мăйракаллă шултра выльăхсене 654 грамм ŷт хуштарнă, хуçалăхри выльăхсен 99 процентне упраса хăварнă;

– Муркаш район администрацийěпе агропромышленность комплексěнче ěçлекенсен профсоюз райкомě çирěплетнě **1-мěш степеньлě диплома**, «2007 çулхи чи лайăх сěт ферми» куçса çŷрекен вымпелпа 5 пин тенкě укçан парнене «Герой» ял хуçалăх производство кооперативěн Çěньял Шурчари сěт фермине (заведующийě А.А. Васильев) парас. Ферма коллективě çулталăк хушшинче пěтěмпе 886,1 тонна е пěр ěне пуçне вăтамран 5035 килограмм сěт сунă;

– Муркаш район администрацийěпе агропромышленность комплексěнче ěçлекенсен профсоюз райкомě çирěплетнě **1-мěш степеньлě диплома**, «2007 çулта мăйракаллă шултра выльăх чи лайăх самăртнă ферма» куçса çŷрекен вымпелпа 5 пин тенкě укçан парнене ăратлă выльăх ěрчетекен «Свобода» ял хуçалăх кооператив-завочěн Йŷтěркассинчи мăйракаллă шултра выльăх самăртакан ферма коллективне (комплекслă бригада бригадирě Г.Г. Белов) парас. Йŷтěркассисен выльăхěсем талăкра вăтамран 1054 грамм ŷт хушнă;

– Муркаш район администрацийěпе агропромышленность комплексěнче ěçлекенсен профсоюз райкомě çирěплетнě **1-мěш степеньлě диплома**, «2007 çулхи чи лайăх сысна ферми» куçса çŷрекен вымпелпа 5 пин тенкě укçан парнене Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативěн Анаткассинчи сысна фермине (заведующийě Л.Л. Яковлева) парас. Анаткассисем çулталăк хушшинче 1061 çура илнě, сыснасене талăксерен вăтамран 780 грамм ŷт хуштарса аш туса илессине 10 процент ŷстернě.




***– Пěр ěне пуçне 4 пинрен пуçласа 5 пин килограмм таран сěт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийěпе агропромышленность комплексěнче ěçлекенсен профсоюз райкомěн* дипломěсене *тата 400-шер тенкě укçан парнесем парас:***

| | |
|---|---|
| **«Герой» хуçалăхпа:** | |
| Мясникова Елена Михайловна | 4710 кг |
| Троицкая Любовь Николаевна | 4567 кг |
| Рыжкова Наталия Вячеславовна | 4558 кг |
| **Суворов яч. хис.:** | |
| Макарова Валентина Валериановна | 4809 кг |
| Орлова Надежда Николаевна | 4809 кг |
| Иванова Галина Александровна | 4800 кг |
| Филиппова Татьяна Николаевна | 4800 кг |
| Гордеева Вера Ильинична | 4698 кг |
| Терентьева Надежда Александровна | 4698 кг |
| Печкова Валентина Николаевна | 4660 кг |
| Михайлова Надежда Валентиновна | 4660 кг |
| **«Оринино»:** | |
| Иванова Василиса Владимировна | 4530 кг |
| Васильева Эльвира Валерьевна | 4530 кг |
| Иванова Ираида Арсентьевна | 4415 кг |
| Кожевникова Надежда Валериановна | 4415 кг |
| Александрова Лидия Васильевна | 4306 кг |
| Блинова Раиса Ананьевна | 4306 кг |
| **Ильич яч. хис.:** | |
| Платонова Галина Юрьевна | 4815 кг |
| Павлова Мария Ивановна | 4753 кг |
| Федорова Галина Григорьевна | 4709 кг |
| Платонова Тамара Витальевна | 4638 кг |
| Петрова Лидия Кимовна | 4628 кг |
| Терентьева Рената Аркадьевна | 4604 кг |
| Федорова Светлана Леонидовна | 4592 кг |
| Павлова Лидия Витальевна | 4576 кг |
| **«Восток»:** | |
| Наумова Анфиса Михайловна | 4928 кг |
| Бычкова Регина Александровна | 4762 кг |
| **«Свобода»:** | |
| Петровская Татьяна Михайловна | 4944 кг |
| Обжелянская Тамара Николаевна | 4756 кг |
| Петрова Маргарита Геннадьевна | 4640 кг |
| Смирнова Любовь Ивановна | 4538 кг |
| Федорова Нина Петровна | 4104 кг |
| **«Ударник»:** | |
| Магомедова Римма Аркадьевна | 4981 кг |
| Васильева Валентина Федоровна | 4953 кг |
| Алексеева Валентина Филипповна | 4864 кг |
| Алексеева Надежда Георгиевна | 4864 кг |
| Иванова Зинаида Леонидовна | 4375 кг |
| Иванова София Алексеевна | 4347 кг |
| Алексеева Лидия Петровна | 4347 кг |
| Гаврилова Евдокия Яковлевна | 4276 кг |
| Димитриев Валерий Иванович | 4267 кг |
| Васильева Лидия Ивановна | 4267 кг |
| Трофимова Валентина Германовна | 4251 кг |
| Александрова Елизавета Михайловна | 4038 кг |

***– Пěр ěне пуçне 5 пин килограмран ирттерсе сěт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийěпе агропромышленность комплексěнче ěçлекенсен профсоюз райкомěн* дипломěсене *тата 600-шер тенкě укçан парнесем парас:***

| | |
|---|---|
| **«Герой» хуçалăхпа:** | |
| Петрова Ольга Витальевна | 5764 кг |
| Сорокина Лидия Михайловна | 5632 кг |
| Васильева Елена Витальевна | 5036 кг |
| Борисова Надежда Михайловна | 5008 кг |
| Андреева Лариса Алексеевна | 5000 кг |
| **Суворов яч. хис.:** | |
| Журавлева Надежда Евгеньевна | 5019 кг |
| Антонова Фаина Юрьевна | 5019 кг |
| **«Оринино»:** | |
| Ковалева Галина Пантелеймоновна | 5101 кг |
| Васильева Зоя Николаевна | 5101 кг |
| **Ильич яч. хис.:** | |
| Семенова Зинаида Михайловна | 5644 кг |
| Иванова Юлия Афанасьевна | 5523 кг |
| **«Свобода»:** | |
| Майорова Майя Ивановна | 5244 кг |
| Кириллова Елена Алексеевна | 5020 кг |
| **«Ударник»:** | |
| Яковлева Роза Платоновна | 5763 кг |
| Яковлев Геннадий Яковлевич | 5763 кг |
| Васильева Галина Леонтьевна | 5632 кг |
| Андреева Зоя Степановна | 5616 кг |
| Варламова Наталья Леонидовна | 5308 кг |

2. Ял хуçалăх производствинчи пысăк производство ŷсěмěсемшěн çěнтерŷçě ятне парса ятарлă хăюпа, Муркаш район администрацийěпе агропромышленность комплексěнче ěçлекенсен профсоюз райкомěн **дипломěпе** тата 500 тенкě укçан парнепе çаксене наградăлас:

2.1 **Ольга Витальевна ПЕТРОВАНА**, «Герой» хуçалăх дояркине – «Районта 2007 çулта ěнесене машинăпа сăвас ěçри чи лайăх оператор». Вăл хăй ушкăнěнчи кашни ěнерен пěлтěр 5764 кг сěт сунă, 100 ěне пуçне 100 пăру илнě;

2.2 **Фаина Николаевна МАКСИМОВАНА**, Суворов яч. хис. хуçалăхри техник-осеменатора – «Районта 2007 çулхи чи лайăх техник-осеменатор». Хуçалăхра 100 ěне пуçне 100 пăру илнě;

2.3 **Елизавета Ильинична ПАРГЕЕВАНА**, «Герой» хуçалăхăн тěп зоотехникне – «2007 çулхи чи лайăх зоотехник». Çак ята ăна выльăх-чěрлěх отраслěнче çěнě технологисемпе малта пыракан опыта пурнăçа кěртнишěн, аш-какай туса илессине 54 процент, сěт туса илессине 17 процент ŷстернěшěн, сумалли пěр ěне пуçне 5035 кг сěт сунăшăн, выльăх йышне 99,7 процент упраса хăварнишěн, мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ŷт хушаслăхне 659 грама, сыснасенне 513 грама çитернишěн памалла тунă;

2.4 **Татьяна Ильинична ЛЬВОВАНА**, Шурчари ветучасток заведующине – «2007 çулхи районти чи лайăх ветеринари ěçченě». Çирěплетнě участокри ветсанитари ěçěсене вăхăтра тата пахалăхлă туса пынишěн;

2.5 **Алина Валерьевна ФИЛИППОВАНА**, Суворов яч. хис. хуçалăхри сысна самăртакан оператора – «Районта 2007 çулта сысна самăртассипе чи лайăх оператор». Сыснасене талăксерен 780 грамм ŷт хуштарса 69 тонна аш илнěшěн;

2.6 **Валентина Александровна ФЕДОТОВАНА**, «Ударник» хуçалăхри пăру пăхакана – «Районта 2007 çулта чи лайăх пăру пăхакан». Унăн пăрăвěсем талăксене вăтамран 701 грамм ŷт хушнă;

2.7 **Иван Афанасьевич ДАНИЛОВА**, «Оринино» хуçалăхри мăйракаллă шултра выльăх самăртакан оператора – «Районта 2007 çулта мăйракаллă шултра выльăх самăртакан чи лайăх оператор». Вăл пăхакан мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен вăтамран 1139 грамм ŷт хушнă;

2.8 **Светлана Васильевна ЛЮБИМОВАНА**, «Моргаушская» чăх-чěп фабрикин чăх-чěп пăхаканне – «Районта 2007 çулхи чи лайăх чăх-чěп пăхакан». Вăл çулталăк хушшинче 10,1 пин пуç чăх-чěп пăхса 2,8 миллион (пěр чăх пуçне вăтамран 317 çăмарта) çăмарта илнě;

2.9. **Августина Кирилловна НОДЫКОВАНА**, «Свобода» хуçалăх конюхне – «Районта 2007 çулхи чи лайăх конюх». Вăл 46 лаша пăхса 100 кěсререн 93 тиха илнě;

2.10. **Леонид Германович СОЛОВЬЕВА**, «Герой» хуçалăхăн Çěньял Шурчари сурăх фермин заведующине – «Районта 2007 çулхи чи лайăх сурăх пăхакан». Вăл çулталăк хушшинче сурăхсен кěтěвне ŷстернě, пěр сурăхран 4,5 кг çăм каснă, 100 сурăх пуçне 103 путек илнě.

2.11. **Любовь Львовна ЯКОВЛЕВАНА**, Суворов яч. хис. хуçалăхри сысна фермин заведующине – «2007 çулхи чи лайăх ферма заведующийě». Фермăра сыснасене пăхассипе тата тăрантарассипе малта пыракан технологисене пурнăçа кěртнěшěн тата сыснасенчен аш илессине 39 процент ŷстерсе 112,7 тонна аш туса илнěшěн, 281 пуç ăратлă выльăх сутнăшăн;

2.12. **Василий Ильич ЯКОВЛЕВА**, Мичурин яч. хис. агрофирмăн хурт-хăмăр ăстине – «Районăн 2007 çулхи чи лайăх утарçи». Вăл иртнě çул пěр çемье пуçне 29 кг пыл илсе пěтěмпе 1,74 тонна пыл туса илнě, вěлле хурчěсене пěтěмпех сыхласа хăварнă;

2.13. **Юлия Александровна РОМАНОВАНА**, «Свобода» хуçалăхăн сысна пăхаканне – «Районта 2007 çулта чи нумай çура илекен оператор». Çулталăкра 554 сысна çури илнишěн, пěр тěп сысна аминчен 20,8 çура, тěрěслемеллинчен 10,9 çура илнишěн.

3.1 Хăйсен профессийěнче «2007 çулта чи лайăх кролик ěрчетекен» ята кроликсен йышне пěчěклетнěшěн тата производство калăпăшне чакарнăшăн парас мар.

**Район администрацийěн пуçлăхě**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

Саккун вăл пуриншěн те пěрре

## *МСО «Моргаушская» ěçěсене вăхăтлăх чарнă*

**Район центрěнчи Парковая урамри хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийě туса лартнă нумай хваттерлě çурт пирки тěрлěрен калаçнине илтме пулать. Нивушлě ăна строительство нормисене пăссах туса лартрěç?**

**И. ИВАНОВ, С. СТЕПАНОВА.**

Пурăнмалли çурт-йěр тăвасси паянхи кун патшалăхăн приоритетлă тěллевě. Çулсерен пурăнмалли çурт-йěр калăпăшěпе çак ěçěн хăвăртлăхě ŷссе пырать. Ку ěçре «Пурăнмалли çурт-йěр» приоритетлă наци проекчě ěçлени те пěлтерěшлě.

Социаллă çурт-йěрěн ырă енěсене курса тăнă çинчех ку чухне асăннă сферăра строительство йěркисене пăснă тěслěхсем пирки те манма юрамасть. Кун хыçěнче строительство объекчěсемпе граждансем усă курма пуçланă чух хăрушсăрлăх ыйтăвě мала тухса тăрать.

Нумаях пулмасть район прокуратури «Моргаушская» МСО» хупă акционерлă общество Муркаш салинчи Парковая урамра нумай хваттерлě çурт тунă çěрте строительство саккунěсене епле пăхăнса ěçленине тěрěслерě. Тŷрех каламалла, тěрěслев вăхăтěнче асăннă строительство организацийěн ертŷçисем строительство валли ирěк илессипе федераллă законодательство ыйтнине пăхăнманни палăрчě.

Раççей Федерацийěн Градостроительство кодексěн 51 статйипе килěшŷллěн строительство валли паракан документ çурт-йěрěн проект документацийě çěр участокěн градостроительство планě ыйтнипе килěшŷллě пулмалла, çак килěшŷ строительство тума, капиталлă строительство объекчěсене реконструкцилеме, Кодекс хирěçлемен тěслěхсенче капиталлă юсав ěçěсем ирттерме ирěк парать. Строительство тăвасси, капиталлă строительство объекчěсене реконструкцилесси, капиталлă юсав ěçěсем ирттересси строительство валли паракан ирěкпе пулса пырать. Вăл е ку çěр участокě çинче строительство ěçěсем тума çěр участокě вырнаçнă çěрти вырăнти самоуправлени органě ирěк парать.

Пирěн тěрěслев çакна кăтартса пачě, Муркаш район администрацийě 2007 çулта «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийě» хупă акционерлă обществăна çěнě çурт тума нимěнле ирěк те паман. Анчах çакна пăхмасăрах «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийě» хупă акционерлă общество Муркаш салинчи Парковая урамра çěнě çурт тăвассипе ěçленě.

Саккуна пăсни куç кěрет. Кун пек чух тунă хваттерсене эксплуатацилесси çынсен сывлăхěпе пурнăçěшěн хăрушлăх кăларса тăратать, çакнашкал лару-тăру строительство организацийěн ертŷçисем саккунлăха пăхăнассине иккěмěш вырăна хăварнине пěлтерет.

Тупса палăртнă йěркесěрлěх тěлěшпе район прокурорě «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийě» хупă акционерлă общество тěлěшпе РФ КоАПěн 9.5 статйин 1-мěш пайěнче пăхнă административлă йěркене пăснăшăн ěç пуçарнă.

Чăваш Республикин Арбитраж сучěн йышăнăвěпе «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийě» хупă акционерлă обществăна административлă майпа айăпланă, ěçсене 30 талăклăха чарса лартнă.

**В. ЗАХАРОВ,**
**прокурора пулăшаканě.**

## *Ирěксěр пŷрте кěнěшěн*

**Ирěксěр çын пŷртне кěнěшěн айăплаççě теççě те кунашкал факт районта пур-и?**

**А. ВАСИЛЬКОВ.**

Тŷрех каламалла, çук мар. Пěр тěслěх çинче çеç чарăнса тăрар. 2007 çулхи октябрěн 23-мěшěнче Ярославкăра пурăнакан пěр арçын «симěс çěлен» тыткăнěнче пěр хěрарăм хваттерне вăйпа кěрсе ирěксěрлесе унпа ар çыхăнăвне кěрет. Ку тěслěхпе халě уголовнăй ěç пырать.

**М. ТАРАСОВ,**
**Етěрнери районсем хушшинчи следстви пайěн уйрăмах кăткăс ěçсемпе ěçлекен следователě.**

## *Выçă тытнишěн айăпларěç-и?*

**Нумаях пулмасть «Лидер» хуçалăхра выçă тытнă тенине илтрěм. Мěн пулса пěтрě унта? Йěркене пăсакансене айăпларěç-и?**

**А. ЛЕВАШОВ.**

Çапла, февраль уйăхěнче «Лидер» агрофирма ертŷçи пулнă Э. Мочалова майлă пулса кунта ěçлекенсен пěр ушкăнě следстви ěçěсем тěрěс мар пыраççě тесе икě хутчен типě тытрě. Халě çак тěслěхсем пирки следстви органěсем тěплě тěрěслев ирттереççě.

**Л. ДАВЛЕТШИН,**
**Етěрнери районсем хушшинчи следстви пайěн аслă следователě.**

Пирěн пата çыраççě

## Ачасем библиотекăран таталмаççě

Турай тěслěх библиотеки шкулпа юнашар вырнаçнă. Çавна май шкул ачисем тăхтав вăхăтěнче яланах библиотекăна туртăнаççě. Унта вěсем тěрлě литературăпа тата компьютер программисемпе паллашаççě. Ку вěсене вěренŷ тěлěшěнчен питě пулăшса пырать.

Библиотека шкулпа юнашар пулни ачасене те питě лайăх. Литература урокěсене ачасем час-часах библиотекăна килеççě.

Кăçал чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я. Яковлевăн 160 çулхи юбилейě пулать. Çавна халалласа библиотека ертŷçи В. Семенова 9-мěш класс ачисемпе викторина ирттерчě.

Ачасем И.Я. Яковлев пурнăçěпе, ěçě-хěлěпе татах та тěплěнрех палашрěç.

**Т. ПЕТРОВА.**